27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1944
АПРЕЛЬ
16
ВЫРСАРНИКУН
76(6571) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, урамри вăйлă çапăçусем хыççăн, Украина область центрне — ТАРНОПОЛЬ хулине пĕтĕмĕшпех туртса илнĕ. ТАРНОПОЛЬ хули чугун çулăн пысăк узелĕ тата нимĕссен оборонин Львов енчи вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулнă.

ТАРНОПОЛЕ туртса илессишĕн пынă çапăçусенче КУРОЧКИН генерал-полковникăн, ЛЮДНИКОВ генерал-лейтенантăн, ПОПОВ генерал-майорăн, МИЩЕНКО генерал-майорăн, ИГНАЧЕВ полковникăн, КУЧЕРЕНКО полковникăн, ВОЛКОВИЧ полковникăн, ЛАЩЕНКО полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн, ФРОЛОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ВОЛКИНШТЕЙНĂН, артиллери генерал-майорĕн ВОЛЧЕКĂН, БОГАТЫРЕВ полковникăн, ДЗЕВУЛЬСКИЙ полковникăн, ЛЮБИМОВ полковникăн, РЕУТОВ полковникăн, ТИТЕНКО полковникăн, ЧЕВОЛ полковникăн, БЕЛОВ полковникăн, БАЗЕЛЕНКО подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОЛУБОЯРОВĂН танковăй çарсен генерал-майорĕн РОМАНОВĂН танкисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн КАМАНИНĂН, авиаци генерал-майорĕн ГАЛУНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн ФЕДУЛЬЕВĂН, ЮЗЕЕВ полковникăн летчикĕсем тата СЕРЕБРЯКОВ полковникăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве палăртса хăварас шутпа ТАРНОПОЛЕ ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе частьсене «ТАРНОПОЛЬСКИ» тесе ят парса тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 15-мĕшĕнче, 20 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăвата тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, ТАРНОПОЛЬ хулине туртса илнĕ УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн эсир ертсе пыракан çарсене, ТАРНОПОЛЕ ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем ЧЕРТКОВ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре малалла тапăнса пынă, Тарнополь облаçĕнчи ТЛУСТЕ район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата ытти 40 яла ытла йышăннă, вăл шутра — ЯГЕЛЬНИЦА СТАРА, ШУЛЬГАНОВКА, ЯГЕЛЬНИЦА, МУХАВКА, АНТОНУВ, СЛОНЕ, ТОРСКЕ ятлă пысăк ялсем.

ОДЕССА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ДНЕСТР лиманĕн хĕвелтухăç хĕррине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă, РОКСОЛЯНЫ, ПЕРВОМАЙСК, КРЫЖАНОВКА, ТЕРНОВКА, КАРАЛИНА БУГАЗ ялĕсене тата ДАЛЬНИК, КАРАЛИНА БУГАЗ чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, Крымри район центрĕсене — БАХЧИСАРАЙ хулине, АЛУШТА хулине, САКИ хулине тата АК-МЕЧЕТЬ, ФРАЙДОРФ, ЗУЯ ялĕсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — ЯРЫЛГАЧ, КУНАН, КАРАДЖА, МЕРЕЖИНО, СУКУР-КОЙ, ОТАР-МАЙНАК, МИХАЙЛОВКА, ИВАНОВКА, КОНТУГАН, БУЛГАНАК, АЗЕК, ВЕРХНИЕ САБЛЫ, НИЖНИЕ САБЛЫ, БИЮК-ЯНКОЙ ятлă пысăк ялсем тата КАМБАРЫ, КНЯЖЕВИЧИ, САКИ, КАРА-ТОБЕ, БУЛГАНАК, АЛЬМА, ШАКУЛ, БАХЧИСАРАЙ чугун çул станцийĕсем.

Каялла чакакан тăшмана пыра-пыра çапса, пирĕн çарсем ăна çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк сухатусем кӳрессĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх, УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем апрелĕн 13-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле тăшманăн 17.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

ПРИМОРСКИ Уйрăм Армийĕн çарĕсем, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, Крымри район центрĕсене — КАРАСУБАЗАР хулине, СУДАК хулине, ИЧКИ ялне туртса илнĕ. Çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — РОЗЕНТАЛЬ, ФРИДЕНТАЛЬ, БАКСАН, УСКУТ, КАПОИХОР, КУТЛАК, ТАРАНТАШ ятлă пысăк ялсем.

Наступлени туса пырса, ПРИМОРСКИ Уйрăм Армийĕн çарĕсем УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх, апрелĕн 13-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле ПРИМОРСКИ Уйрăм Армийĕн çарĕсем тăшманăн 14.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Апрелĕн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 34 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 18 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Одесса хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Днестр лиманĕ хĕррипе кĕçĕсе лартнă нимĕçсем хирĕç тăрса хытă çапăçнă. Вăйлăн персе тата контратакăсем тăва-тăва, вĕсем хăйсен чаçĕсене, хĕçпăшалне тата техникине лиман урлă каçармалăх вăхăт тупасшăн пулнă. Пирĕн çарсем, çав тери хăвăрт пыра-пыра çапса, тăшмана аркатса тăкнă, Днестр лиманĕн хĕвелтухăç хĕррине фашистла нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Нимĕçсен уйрăм ушкăнĕсем лиман урлă сулăсемпе кимĕсем çине ларса каçма хăтланнă, анчах вĕсене пирĕн самолетсем атакăласа шыва путарса пĕтернĕ. Хĕçпăшал, боеприпас тата завод оборудованине турттарса пыракан эшелона тытса илнĕ. Овидиополь район центрĕнче тытса илнĕ трофейăсем хушшинче 36 тупă, 10 тягач тата тĕрлĕрен çар хатĕрĕсем тиенĕ 200 автомашина пур.

* * *

Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсем çав тери хăвăрт туса пыракан наступление малалла вăйлатса пынă. Пирĕн стрелоксен моторизованнăй чаçĕсем тăшманпа çапăçса Саки хулине туртса илнĕ, вара, тăшманăн аркатса тăкнă çарĕсене хăвалаеа пырса, Саки хулипе Симферополь хули хушшинчи шоссе çулне тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă. Крымăн хĕвеланăç çыранĕнче нимĕçсем хирĕç тăма хăтланса пăхнă. Пирĕн çамăллăн куçса çӳрекен соединенисем тăшмана лӳчĕркесе тăкнă та кăнтăралла хăвăрт куçса пыраççĕ. Совет танкисчĕсемпе пехотинецĕсем Бахчисарай хулине туртса илнĕ, халĕ вĕсем тăшманпа Крымăн вăрманлă-туллă пайĕнче çапăçаççĕ. Пирĕн ытти чаçсем кун каçиччен 40 километр малалла куçнă, Крымăн кăнтăр çыранне тухнă та, сасартăк пырса çапса, Алушта хулине туртса илнĕ. Çапла вара пирĕн çарсем Феодосия хулинчен каялла чакакан тăшман çарĕсен Ялта хулине пымалли çулне татса пăрахнă. Сейтлертан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман çарĕсен ушкăнне çавăрса илсе аркатса тăкнă. Пин салтакпа офицер ытла тата вĕсене ертсе пыракан полк командирĕ Бату Флорин тыткăна парăннă. Румынсен 9-мĕшпе 10-мĕш дивизийĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Нимĕçсен пĕр пехотнăй дивизине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Темĕн чухлĕ вăрçă техники, чугун çул вагонĕсемпе паровозсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнĕ çар çыннисем каласа кăтартнă тăрăх, нимĕçсемпе румынсен генералĕсем, хăйсен дивизийĕсене пăрахса хăварса, Крымран самолетсем çине ларса тарнă.

* * *

Приморски Уйрăм Армийĕн çарĕсем çаплах ăнăçлă наступлени туса пынă. Тăшман, хушăри позицисенче чарăнса тăрса, хăйĕн çĕмĕрсе тăкнă чаçĕсене йĕркелеме хăтланнă, анчах та йĕркелеймен. Пирĕн боецсем гитлеровецсем хирĕç тăнине хăвăрт çĕнтерсе пыраççĕ, хирĕç тăракансене пĕтерсе тăкаççĕ. Юттисене тыткăна илеççĕ. Приморски Уйрăм Армийĕн çарĕсем Карасубазар хулине туртса илнĕ те Украинăри 4-мĕш фронт çарĕсемпе пĕрлешнĕ. Хура тинĕс хĕррипе наступлени туса пырса, пирĕн боецсем Судак хулине туртса илнĕ. Нимĕçсемпе румынсен ку районра пуханса тăнă темĕн чухлĕ çарĕсене аркатса тăкнă. Тулли мар даннăйсем тăрăх, кун каçиччен нимĕçсенчен 160 тупă, 110 миномет, 310 пулемет, 5.000 винтовкăпа автомат, 25 трактор, 10 обоз, 1.500 лаша тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Хăраса ӳксе каялла чакакан нимĕçсем Крым варринелле пыракан çулсем çинче хăйсен автомашинисемпе винтовкисене тата боеприпасĕсене кăна мар, хăйсен çинчи обмундированине те—шинелĕсене, аттисене, каскисене, ялала миххисене тата противогазĕсене те—пăраха-пăраха хăвараççĕ.

* * *

Хура тинĕс флочĕн авиацийĕпе карапĕсем халлĕхе тăшман аллинче тăракан портсенчен тухма хăтланакан тăшман суднисене татти-сыпписĕр пыра-пыра çапаççĕ. Паян флот карапĕсем тăшманăн 3.000 тонна таякан транспортне путарнă. Совет летчикĕсем нимĕç пехотине турттарса пыракан хăй тĕллĕн çӳрекен 3 десант баржине путарнă. Хăй тĕллĕн çӳрекен 5 баржăна хытă сиенленĕ, вĕсем халĕ малалла каяйми пулнă. Кунсăр пуçне тата ытти темиçе пĕчĕк суднăна шыва путарнă. Уçă тинĕсре пирĕн летчиксем тăшманăн вăйлă сыхласа пыракан транспортне атакăланă. Судно çинче вăйлă пушар тухнă. Тăшманăн пĕр миноносецне вăйлă сиенленĕ. Тăшман хăйĕн пĕтсе ларас патне çитнĕ Крымри группировкин хăшпĕр пайне те пулин кăларса кайса çăлма хăтланать, анчах та пирĕн моряксемпе летчиксем вĕсем тăрăшнине пурне те пĕтерсе пыраççĕ.

* * *

Львов облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕсем виçĕ кун хушшинче нимĕçсен 4 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Тата унсăр пуçне совет патриочĕсем шоссе çулĕ çинче 3 кĕпере тата артиллери снарячĕсен складне сирпĕнтерсе янă. Апрелĕн 1-мĕшĕнче Львов облаçĕнчи партизансем тăшманăн пĕр ялти гарнизонне аркатса тăкнă, çавăн чухне 60 гитлеровеца вĕлернĕ.

СССР Совнаркомĕнчен, СССР Оборона Халăх Комиссариатĕнчен тата ВКП(б) Центральный Комитетĕнчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, СССР Оборона Халăх Комиссариачĕ тата ВКП(б) Центральный Комитечĕ питĕ хурланса çакăн çинчен пĕлтерессĕ: апрелĕн 15-мĕшĕ ыран тепĕ чух çĕрле, йывăр операци тунă хыççăн, Киев хулинче Арми генералĕ Николай Федорович Ватутин вилнĕ. Вăл Украинăри 1-мĕш фронтăн командующийĕ пулнă. Н. Ф. Ватутин большевиксен партийĕн шанчăклă ывăлĕ, Хĕрлĕ Çарăн чи лайăх руководителĕсенчен пĕри пулнă.

Ватутин юлташа çухатса, государство Отечественнăй вăрçăра мала тухнă чи талантлă çамрăк полководецсенчен пĕрне çухатрĕ.

Арми генералне Н. Ф. Ватутина Киев хулинче пытараççĕ.

Арми генералне Н. Ф. Ватутина ĕмĕр асра тытмалла пултăр тесе, Киев хулинче ăна памятник лартаççĕ.

УССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен, УССР Оборона Халăх Комиссариатĕнчен тата Украинăри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитетĕнчен

УССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, УССР Оборона Халăх Комиссариачĕ тата Украинăри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ питĕ хурланса çакăн çинчен пĕлтереççĕ: апрелĕн 15-мĕшĕ ыран тепĕ чух çĕрле, йывăр операци тунă хыççăн, Киев хулинче Арми генералĕ Николай Федорович Ватутин вилнĕ. Вăл Украинăри 1-мĕш фронтăн командующийĕ пулнă. Н. Ф. Ватутин большевиксен партийĕн шанчăклă ывăлĕ, Хĕрлĕ Çарăн чи лайăх руководителĕсенчен пĕри пулнă.

Çав тери талантлă полководеца Ватутин юлташа Украина халăхĕ ĕмĕр-ĕмĕр манмĕ, вăл Украина халăхне ирĕке кăларассишĕн хăйĕн мĕнпур вăйĕпе пĕлĕвĕсене пачĕ.

Çуракинчи массăллă-политикăллă ĕçĕн задачисем

И. ИВАНОВ

ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ

Пирĕн орденлă Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе тата аслă Сталинăн сăмахĕсемпе, приказĕсемпе хавасланса 1943 çулхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç, пĕрчĕллĕ тырăсем тата ялхуçалăхĕн ытти культурисене те тухăçлăн туса илчĕç, государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене срокчен пурнăçа кĕртрĕç. Республикăпа Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премине илнĕ.

Ялхуçалăх çулне ăнăçлăн ирттерес ĕçре колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе тата районсемпе колхозсем, бригадăсемпе колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пыни пысăк выран йышăнчĕ.

Халĕ эпир вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çуракине кĕтĕмĕр. Çураки ĕçĕсем пуçланиччен шутлă кунсем çеç юлчĕç. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăçал ялхуçалăх умĕнче тăракан тĕп задача—тырпул тухăçлăхне пур майсемпе те ӳстерсе пырасси тата тĕш-тырăпа ытти ялхуçалăх продукчĕсене ытларах туса илесси пулать тесе кăтартса пачĕç. Фронтпа тăван çĕршыв çавăн пек тума хушаççĕ. Пирĕн аслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр Сталин юлташ çавăн пек тума хушать. Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ колхозниксемпе колхозницăсене уйхирсенче вăя шеллемесĕр ĕçлесе фронтпа çĕршыва тырпул, аш-какай, промышленноçа чĕртаварсем ытларах та ытларах парса тăма чĕнет.

Çак тĕп задачăна пурнăçа кĕртнĕ çĕре пирĕн хамăрăн халăхăн пĕтĕм вăйне тата мĕнпур майсене мобилизацилемелле. Колхоз хресченĕсемпе МТС работникĕсем хушшинчи агитациллĕ-массăллă тата политикăллă-массăллă ĕçĕн мĕнпур вăйне çак задачăна пурнăçа кĕртме пăхăнтармалла.

Тухăçлă тырпул туса илесси çуракине ăнăçлăн ирттернинчен нумай килет. Çавăнпа та халĕ ялта çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитсе ăна лайăх пахалăхпа ирттермелле тăвассинчен ответлăрах задача урăх çук та темелле.

Агитаторсемпе пропагандистсем колхозниксемпе МТС работникĕсене партипе правительство 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановлени хуçалăхпа политика тĕлĕшĕнчен паллă вырăнта тăни çинчен тата çав постановленире кăртнă мĕнпур задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлеме кирли çинчен тарăнăн ăнлантарса пама тивĕçлĕ.

Уйрăмах çураки валли лайăх пахалăхлă вăрлăхсем хатĕрлесси тата çураки вăхăтĕнче агротехникăна çирĕппĕн пăхăнасси çине хытă çавăрăнса пăхмалла. Агитаторсен колхозниксемпе трактористсен массине çураки ĕçĕсене лайăх пахалăхпа тăвассишĕн, кăçал пур культурăсем тăрăх та тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешме мобилизацилемелле.

Çак ĕçре массăллă-политикăллă ĕçĕн пур формисемпе те усă курмалла. Каласусемпе докладсем ирттересси, хаçатсем вуласа парасси, производствăллă канашлусем ирттересси, уйрăм çынсемпе каласасси, хаçат витринисем, плакатсем, лозунгсем, кăтарту хăмисем, юлашки хыпарсен хăмисем, хĕрлĕ ялавсем, «Боевой листоксем», — çаксемпе туллин усă курмалла тăвас пулать.

Агитаторăн, яланхи пекех, производствăра колхозниксемпе тата трактористсемпе юнашар тăрса ĕçлесе хастарлăхпа организацилăхĕн, çирĕп дисциплинăн тĕслĕхĕсене кăтартмалла, хăйĕн большевикла сăмахĕпе, ĕçĕпе массăсене çитĕнӳсем тума хаваслантарса пымалла. Агитатор социализмлă ăмăртăва пуçарса пыраканĕ пулма тивĕçлĕ, унăн пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене тата МТС работникĕсене социализмлă ăмăртăва явăçтармалла, илнĕ обязательствăсене тăтăшах тĕрĕслесе тăрассине организацилемелле.

Халĕ, çураки ĕçĕсем пуçланас умĕн, пур колхозсенче те, совхозсенче те, МТС-сенче те тата подсобнăй хуçалăхсенче те партипе комсомол активĕн пухăвĕсене, колхозниксен пухăвĕсене, МТС-семпе совхозсен тата подсобнăй хуçалăхсенчи рабочисемпе служащисен пухăвĕсене ирттермелле. Вĕсенче çуракине хатĕрленсе çитес тата çуракине ирттерес ыйтусене сӳтсе-явнă чухне партипе правительство 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленине тата ВКП(б) Обкомĕн XVIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене тĕп никĕсе хумалла.

Партипе комсомол организацийĕсен, агитаторсен çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитессишĕн тата ăна ăнăçлăн ирттерессишĕн май уйвĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва анлăн организацилемелле, ăна тивĕçлипе ертсе пымалла.

Çураки вăхăтĕнче пĕтĕм массăллă-политикăллă ĕçе трактор бригадисемпе уйхир бригадисем ĕçленĕ çĕре—хире куçармалла. Уйхиртех агитпунктсем, куçса çӳрекен библиотекăсем организацилемелле, хаçатсем вуласа парассине, юлашки хыпарсене вăхăтра пĕлтерессине, боевой листоксем кăларассине йĕркелесе ямалла. Çак ĕçсене туса пыма халех мĕнпур бригадăсенче пултаруллă агитаторсене тупса çирĕплетмелле.

Агротехникăна пăхăнмасăр тухăçлă тырпул туса илме май çук. Çавăнпа та ĕнтĕ колхозниксемпе трактористсем хушшинче агротехникăллă пĕлӳ парас ĕçе анлăн сарса пымалла. Çак ĕçе тума агрономсене, учительсене, ялхуçалăхĕнче малта пыракансене тата ялхуçалăхĕнчи ытти специалистсене явăçтармалла.

Парти организацийĕсен çураки вăхăтĕнчи массăллă-политикăллă ĕçĕн планне ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă решенине килĕшӳллĕн тумалла, ялти партипе совет активне çуракине ăнăçлăн та лайăх пахалăхпа ирттерессишĕн кĕрешме, кая юлса пыракан колхозсене ĕçлĕ пулăшу пама мобилизацилемелле. Агитаторсемпе вулав сурчĕсен заведующийĕсене пухса семинарсем ирттермелле, вĕсенче партипе правительство 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановление, ВКП(б) Обкомĕн XVIII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене тата ялти агитаторсемпе вулав çурчĕсен çураки вăхăтĕнчи задачисем çинчен сӳтсе-явмалла. Агитациллĕ-массăллă ĕçе коммунистсене, комсомолецсене, учительсене, отечественнăй вăрçă участникĕсене анлăн явăçтармалла. Халиччен ĕçлемен вулав çурчĕсене ĕçлеттерме пуçламалла. Вĕсенче культурăллă йĕрке тумалла. Вулав çурчĕсен заведующийĕсене тĕрĕслесе тухса, кун ĕçе пултаруллă тата ĕçе пĕлекен çынсене лартмалла. Вулав çурчĕсем валли литература, плакатсем, лозунгсем, инвентарь çителĕклĕ таранах тупса памалла. Колхозсемпе МТС-сенче стена хаçат редакторĕсем пулма тата «Боевой листоксен» редакторĕсем пулма пултаруллă çынсене суйламалла, вĕсемпе семинарсем ирттермелле тата вĕсене материалсем, «Боевой листоксен» макечĕсем çителĕклĕ таранах тупса памалла.

Агитколлективсен руководителĕсен ответлăхне ӳстермелле. Вĕсене пулăшас ĕçе тата вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăрассине лайăхлатмалла. Докладсен, лекцисен, каласусен пахалăхĕ çине уйрăмах хытă çавăрăнса пăхмалла. Вĕсене колхозниксемпе МТС работникĕсем умĕнче тăракан задачăсемпе таччăн çыхăнтарса ирттермелле. Агитаципе пурнăçпа çыхăнтарса туса пырас пулать.

Ялта лекцисем ирттерес ĕçе вăйлатас пулать. Районсенчи руководительсен ялсенче политикăллă докладсем ирттерес пулать. Ялсене докладсем тума ВКП(б) райкомĕн работникĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене ямалла.

Парти кабинечĕсен халĕ ниçхăçанхинчен те оперативлăрах ĕçлемелле. Вĕсен докладчиксемпе агитаторсене тезиссем хатĕрлеме, литература суйласа илме, çĕршывăн, районăн, республикăн, колхозăн пурнăçĕнчи фактсене суйласа илме пулăшмалла. Парти кабинечĕсен докладчиксемпе агитаторсем валли теориллĕ докладсем, консультацисем ирттермелле, пĕрерин опычĕпе паллашма канашлусем ирттермелле.

Вырăнти радио ĕçне татăкланах лайăхлатмалла. Радио тăрăх район руководителĕсем тата ялхуçалăхĕнче малта пыракансем тăтăшах тухса калассине организацилемелле. Халăха кино кăтартас ĕçе те лайăхрах йĕркелес пулать. ВКП(б) райкомĕсен районри тата колхозсемпе МТС-сенчи хаçатсене тивĕçлипе ертсе пымалла. Хаçатсене, радиона, кинона—пĕтĕмпех çуракине ăнăçлăн ирттерес ĕçе пăхăнтармалла.

Массăллă-политикăллă ĕçĕн тĕп никĕсне Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă Аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă докладне, Сталин юлташ 1943 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче, 1944 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче кăларнă приказсене, партипе правительство 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановление, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тата ВКП(б) Обкомĕн XVIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене хумалла.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар отечественнăй вăрçă фрончĕсенче тунă историллĕ çĕнтерӳсем тата совет воинĕсен паттăрла ĕçĕсем пире лайăхрах ĕçлеме, тухăçларах тырпул туса илме чĕнеççĕ, çапла вара Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хамăр аларах тытса тăма чĕнеççĕ.

Кашни коммунистăн, комсомолецăн тата агитаторăн тивĕçлĕхĕ—пĕтĕм вăя хурса ĕçленин тĕслĕхĕсене кăтартасси, пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене тата МТС работникĕсене фашистла нимĕç захватчикĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкассишĕн, хамăрăн таса çĕре тăшмансенчен тĕпĕ-йĕрĕпех тасатса çитерессишĕн вăйлă тырпул туса илме кĕрешнĕ çĕре çĕклесе пулса тăрать.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

Продукци тата ытларах туса кăларар

ОКТЯБРЬСКОЕ. «Труд» артель коллективĕ, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пырать. Артель, кăçалхи пĕрремĕш кварталти заданне мартăн 8-мĕшĕ тĕлне ăнăçлăн пурнăçласа, апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне плантан ирттерсе 250 пин тенкĕлĕх продукци туса пачĕ. Рабочисемпе работницăсем иккĕмĕш кварталта татах та тухăçларах ĕçлеме пулчĕç. Тир-сăран заводĕнче ĕçлекенсем Д. Григорьев, П. Ермолаев, В. Соколова юлташсем кулленхи задание 400—500 процент пурнăçлаççĕ.

Март уйăхĕнче эпир плана пĕтĕм продукци енĕпе 142,5 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 170 процент пурнăçларăмăр. Февраль уйăхĕпе танлаштарсан, продукци туса кăларассине 8,7 пин тенкĕлĕх ӳстертĕмĕр.

Çак кунсенче пур цехсенче те Мускаври станоксем тăвакан Ленин орденлĕ «Красный Пролетарий» завод коллективĕ Совет Союзĕнчи промышленноçпа транспортри мĕнпур рабочисене май уявĕ умĕнхи ăмăртăва анлăн сарса яма чĕнсе каланине сӳтсе-яврăмăр. Кашни цех коллективĕ, ĕç тухăçлăхне тата ытларах хăпартма пулса, конкретнăй обязательствăсем илчĕ.

Артелĕн ĕçне кадрсем татса параççĕ. Çак ыйту çине эпир яланах тимлĕн çавăрăнса пăхатпăр. Халĕ артельте хĕрарăмсене атă-пушмак çĕлеме вĕрентетпĕр. Çак кунсенчех 12 хĕрарăм атă-пушмак çĕлеме вĕренсе çитеççĕ.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар хамăр çĕре тăшмантан тасатса пыни артельте ĕçлекенсене ĕçре çĕнĕ вăй-хăват парать. Кашни рабочипе работница паттăр Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем çине производствăри çитĕнӳсемпе ответлессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Эпир апрель уйăхĕнчи производство планне срокчен 5 кун малтан пурнăçлама пулатпăр. Ку тĕлĕшпе май уявĕ умĕнхи ăмăртăва анлăн сарса ятăмăр.

И. МОКЕЕВ,
«Труд» артель правленийĕн председателĕ.

ХАСТАРЛĂ ФИНАГЕНТ

ВАРНАР. Кушлавăш ялсоветĕнче виççĕмĕш çул ĕнтĕ Степанида Родионова финагент пулса ĕçлет. Вăл тăрăшса ĕçленипе ялсовет 1944 çулхи пĕрремĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли задание 181 процент тултарчĕ, ку тĕлĕшпе районра пĕрремĕш вырăна тухрĕ. С. Родионова юлташ çамрăк пулин те, кăтартуллăн ĕçлет.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, С. Родионова юлташ иккĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана майăн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама пулчĕ.

В. ШАХАЛОВ.

Фронтпа çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçлаççĕ

ТАВАЙ, апрелĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Промкомбинат коллективĕ март уйăхĕнчи производство планне 155,3 процент пурнăçларĕ. Урапа-çунасем тăвакан, тăмран чашăк-тирĕк тăвакан тата атă-пушмак çĕлекен цехсем уйрăмах кăтартуллăн ĕçлерĕç. Урапа-çунасем тăвакан цех (бригадирĕ С. Трофимов юлташ) март уйăхĕнчи задание 180 процент таран тултарчĕ. З. Козлов, И. Алексеев, В. Прокопьев стахановецсем ĕç нормине кунсерен 200—250 процент тултараççĕ.

Комбинатри рабочисемпе работницăсем, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, апрель уйăхĕнчи задание срокчен 10 кун малтан пурнăçлама, ĕç тухăçлăхне 10 процент ӳстерме пулчĕç.

— Фронтпа çĕршыва ытларах та ытларах продукци туса парассишĕн эпир хамăрăн пĕтĕм ресурссене мобилизацилесе, хамăрăн шалти майсемпе туллин усă курса, вăй-хала шеллемесĕр ĕçлетпĕр, — теççĕ комбинатра ĕçлекенсем.

А. ИГНАТЬЕВ,
Промкомбинат управляющийĕ.

Шупашкарти горпромкомбинатра

Горпромкомбинат коллективĕ (управляющийĕ Григорьев юлташ) март уйăхĕнчи задание ăнăçлăн пурнăçларĕ. Коллектив май уявне ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн, апрель уйăхĕнчи задание 6 кун малтан пурнăçлассишĕн кĕрешет.

Ялхуçалăх специалисчĕсен республикăри канашлăвĕ

Апрелĕн 13-мĕшĕнче Шупашкарта ялхуçалăх специалисчĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен» йышăннă постановленине пурнăçламалли мероприятисене сÿтсе-явре.

Çак мĕтупа Калинино райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Логинов юлташ, Ишлей райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Федоров юлташ тата Улатăр райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Мокеев юлташ ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен» йышăннă постановленине пурнăçа кĕртес енĕпе хăйсен районĕсенче мĕнле ĕçленине каласа пачĕç.

Вăйлă тырпул туса илес ĕçре агрономсем [illegible] Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн агротехника [illegible] Управленийĕн начальникĕ А. Беляев юлташ сăмах тухса каларĕ. Пирĕн республикăра [illegible] агрономсем тырă тухăçлăхне ÿстерес тата агротехникăна пурнăçласа [illegible]. Çĕрпÿ районĕн главнăй агрономĕ П. Шишков юлташ [illegible] 10 çул хушши ĕçлет ĕнтĕ. Çак вăхăтра [illegible] Улатăр районĕнчи агрономсем Корнилова, Степанов тата Титов юлташсем, Вăрнар районĕнчи Данилов, Ерлакова юлташсем те мухтава тивĕçлĕ ĕçлессĕ.

— Анчах та хăшпĕр агрономсем, — терĕ Беляев юлташ, — хăйсен ĕçне [illegible] тĕп ыйтусене [illegible] массăна мобилизацилеме пĕлмеççĕ. Ялхуçалăх ĕçĕнче агротехникăна [illegible].

Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕн заместителĕ Герасимчик юлташ, Çĕнтерчăрри райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Титов юлташ, Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн научнăй сотрудникĕ Петропавловский юлташ, Çĕнтĕр районĕн «Свобода» колхозри агрономĕ Панфилов юлташ, Главрастхучукăн представителĕ Фурман юлташ, ялхуçалăх институчĕн доценчĕ Тураев юлташ, Вăрнар райçĕрĕç пайĕн главнăй зоотехникĕ Григорьева юлташ, Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн доценчĕ П. Бережная юлташ тухса калаçрĕç.

Юлашкинчен канашлура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Пирĕн республикăна [illegible] вăйлă тырпул туса илмешĕн Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне [illegible] 1944 çулта тухăçлă тырпул туса [illegible].

«1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен государство планĕ çинчен» йышăннă постановленире партипе правительство ялхуçалăх специалисчĕсем [illegible]. Агрономсем партин организацийĕсемпе пĕрле тырă тухăçне ÿстерессишĕн кĕрешсе [illegible]. Вăрнар районĕ [illegible] тухăçлă тырпул туса илет. Ку ĕçре, паллах, ялхуçалăх специалисчĕсен те пысăк выран йышăнать. Анчах хăшпĕр агрономсем [illegible]. Шăмăршă, Пăрачкав, Куславкка, Улатăр районĕсем, иртнĕ çул агротехникăна кирлĕ пек пурнăçласа пымасăр пирки, начар тухăçлă тырпул туса илчĕç.

[illegible] Ялхуçалăх специалисчĕсем кăçал тухăçлăрах тырпул, пахча-çимĕç туса илессишĕн, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне хамăр республикăрах хăварассишĕн большевикла кĕрешĕç,—терĕ Чарыков юлташ, хăйĕн сăмахне вĕçлесе.

Район çуракине тухма хатĕр

(Ишлей райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ К. Ф. Федоров юлташ тухса каланинчен)

Пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем иртнĕ çул ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлерĕç. Çураки планне 109 процент пурнăçланă.

Малта пыракан колхозсенче вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешме организациленĕ звеносем 1937 çултанпах ĕçлессĕ. «Большевик» колхозра, вăрçă вăхăтĕнче ĕç вăйĕ чакнине пăхмасăрах, пĕлтĕр тухăçлă тырпул туса илнĕ. «Ырăш» колхозри Григорьева юлташ ертсе пыракан звено кашни гектартан 24,5 центнер тырă илнĕ. «Акара» колхоз кашни гектартан 178 центнер çĕрулми, «Красные Яуши» колхозра 160 центнер çĕрулми пухса илнĕ.

Çакăн пек пысăк тухăçлă тырпулпа çĕрулми туса илни вăл пĕтĕмпех агротехникăна пурнăçласа пынинчен килнĕ. «Акара» колхоз членĕсем кăçал кашни гектартан 200 центнер çĕрулми туса илес задача лартрĕç. Çĕрулми лартмалли выранă 2.300 лав тислĕк кăларнă, 110 центнер кĕл тата 66 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрленĕ. Çĕрулми тата кантăр туса илес тĕлĕшпе ĕçлеме 3 звено тунă.

Пирĕн район çуракине тухма пур енчен те хатĕрленсе çитрĕ. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене тасатса хунă тата кирлĕ пек кондицие лартнă. 24 колхозра хăшпĕр вăрлăхсем çитместчĕç, вĕсене эпир колхозниксенчен кивçен илсе хыврăмăр. Çапла майпа пурĕ 1050 пăт пухнă.

Çуракине хатĕрленнĕ май, колхозсем уя 117.690 лав тислĕк кăларчĕç, çапла вара çулталăкри плана 76 процент тултарчĕç. Кĕл пухмалли плана 128 процент, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли плана 123 процент тултарнă. Анчах торф кăларас енĕпе эпир çителĕксĕр ĕçлерĕмĕр, плана пурĕ те 5,4 процент кăна тултарнă.

Кашни колхозах çулталăкри ĕçсен отчетне, производство тата ака вăхăтĕнчи плансене туса пĕтернĕ. Пусуçаврăнăшне пăснă тĕслĕхсем çук, анчах та хăшпĕр çĕрте клевер акасси планпа пăхнă пек пулса пыман. Вăрлăх участокĕсене кашни колхозрах уйăрнă; çав участоксенче ĕçлеме ятарласах звеносем тунă. Районĕпе пурĕ вăрлăх участокĕсенче 86 звено ĕçлемелле.

Çак кунсенче колхоз председателĕсемпе бригадирсен тата старши конюхсен семинарне ирттертĕмĕр. Унта ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен государство планĕ çинчен» йышăннă постановленине вĕрентĕмĕр тата çураки вăхătĕнче мĕнле ĕçлесси çинчен сÿтсе-яврăмăр. Семинарта çĕр ăшĕнче нÿрĕ ытларах тытса хăварма пулăшакан практикăллă мероприятисене пăхса тухрăмăр. Çуракине кăçал эпир 7—8 кунта ирттерме шутлатпăр. Лашасем вăтам самăр. Тракторсем юсавлă, пурте ĕç выранĕсене çитнĕ.

Çуркунне кăçал вăрăма тăсăлчĕ, юр хулăнăшĕ пысăк. Анчах та çĕр юр айĕнче ăшăннă. кĕрхи калчасем хускалма тытăнаççĕ. Çавăнпа та, калчасем çĕрсе е пăчланса пĕтес хăрушлăх пуррине асра тытса, юр хулăм выртакан вырансене чавса шăтăк тăватпăр, çапла вара кĕрхи калчасем патне уçă сывлăш кĕртсе, вĕсене çĕресрен е пăчланасран хăтарса хăварасшăн. Юр хулăн выртакан вырансене кĕл, хăрăм, торф тата ытти хура япаласем сапассине организацилетпĕр. Апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне ку ĕçе «Красный танк», «Богатырь», «Партизан», «Большевик», «Активист» тата ытти колхозсенче те пуçăннă.

Ака çинче ĕçлеме лашасемпе пĕрлех 258 кастарнă вăкăра ĕçе вĕрентнĕ, вĕсене кÿлмелли хатĕрсем çителĕклех.

Кăçал çураки ĕçне хĕрарăмсем йышлăн хутшăнаççĕ. Ĕçе ирхине 3—3,5 сехетре тухма шутлаççĕ. 7—8 сехет тĕлĕнче сехет е сехет çурă каņу вăхăчĕ тăвасшăн. Çапла вара хĕрарăмсем уйхир ĕçĕсене те, килти ĕçсене те ĕлкĕрсе пырасшăн.

Çураки вăхăтĕнче ĕçĕн пахалăхне сăнама опытлă колхозниксене уйăрнă, вĕсем начар ĕçленине чăтса тăрас çук.

Районри колхозсенче çĕрулми вăрлăхĕ те çителĕклĕ. 15 колхозра çĕрулми тăррине касса 64 центнер вăрлăх хатĕрленĕ.

Пахча-çимĕçсем туса илес ĕçе уйрăм колхозсенче пуçăннă та ĕнтĕ. «Красное знамя» колхоз 125 тăваткал метр çинче сухан туса илет, суханне сутма тытăннă. «Красные Яуши» колхозра 15.000 тĕп помидор тата 50.000 тĕп купăста вырнаçмалăх парник тунă. «Çĕнъял» колхозăн парникĕнче ешĕл сухан, куçарса лартмалли помидор тата ир çитĕнекен купăста ÿсет.

Халĕ лашасене çураки тĕлне хатĕрлес ĕç пырать. Улăма тураса, вĕри шывпа пĕçерсе çитереççĕ. Улăм çине тăвар, пĕçернĕ çĕрулми яраççĕ. Çапла çитерсен, вăйсăр лашасем часах аванланаççĕ.

Кăçал эпир çуракине кĕске срокра, пысăк пахалăхпа ирттерес задача лартрăмăр. Вăл задачăна эпир пурнăçлатпăрах.

Кăçал иртнĕ çулхинчен аванрах ĕçлетпĕр

(Калинино райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Логинов юлташ тухса каланинчен)

Иртнĕ çул пирĕн район çураки планне 104 процент пурнăçларĕ. 1942 çулхинчен 10—12 кун маларах вĕçлерĕ. Кĕраки планне 100 процентчĕпех пурнăçларĕ. Кĕрхи калчасем юр айне аван кĕрсе юлчĕç. Хĕллехи вăхăтра уя тислĕк кăлармалли плана 107 процент тултартăмăр. Агротехникăна пăхăнса, лайăх ĕçлесе, иртнĕ çул пĕтĕм районĕпе кашни гектартан 13,2 центнер тĕштырă пухса илнĕ.

Вăрлăх участокĕсем çине вăрлăхсене вутпуççинчен тасатас шутпа тĕрлĕ имçамсемпе чÿхесе тата машинăпа акнă. Иртнĕ çул эпир техникăллă культурăсемпе акмалли тата çĕрулми лартмалли [illegible]

гартан 180—190 центнер çĕрулми илнĕ. Планран ирттерсе акнă çĕр çинчен пухса илнĕ 22.295 пăт тырра пĕтĕмпех оборона фондне панă.

Выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ÿстермелли плана пĕтĕмпех пурнăçланă. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен хăтарнă районсене пулăшма 335 пуç выльăх ярса патăмăр.

Кăçал эпир иртнĕ çулхинчен вăйлăрах тырă туса илессишĕн кĕрешетпĕр. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене акма юрăхлă туса хунă. 2.300 центнер вăрлăхлăх пăрçана пĕтĕмпех алăпа суйласа хунă. Уя 159.640 лав тислĕк кăларнă. «Клевер», Ленин тата Киров ячĕсемпе тăракан [illegible]

Звено членĕсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетмелле

(Улатăр райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Мокеев юлташ тухса каланинчен)

Выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕçре курăк акса тăвасси пысăк выран йышăнать. Çавăн пекех курăк, уйрăмах клевер акни, тырă тухăçлăхне ÿстерес ĕçре пахи — пуриншĕн те паллă. Анчах пирĕн ĕçре нумай чухне çапла пулса тухать: клевер çинчи çумкурăкĕсене тасатмаççĕ, вăл пурпĕрех курăк теççĕ. Çакă пачах та тĕрĕс мар вара. Клевер çинчи çумкурăксене çумламалла.

Пусуçаврăнăшне мĕнле пурăçа кĕртнине чи малтан пирĕн, агрономсен, тĕрĕслесе тăмалла.

Колхозниксемпе колхозницăсене уйрăм гектар çумне çирĕплетни те пысăк выран йышăнса тăрать. Иртнĕ çул Сталин ячĕпе тăракан колхозра махорка туса илекенсене пĕрер гектар уйăрса патăмăр. Халичченхи кунта гектартан 15—20 центнер махорка илетчĕç. Иртнĕ çул вара вăтамран 45-шер центнер илчĕç. Звенон хăшпĕр членĕсем 75-шер центнер илчĕç.

Уйхирти пур ĕçсене те звеносем урлă туса пыни агротехникăна ĕçре анлăн пурнăçласа пыма май парать. Звено членĕсене уйрăм участок çумне çирĕплетни ĕç тухăçлăхне кăна хăпартмасть, ĕçĕн пахалăхне те аванлатать, обезличкăна тата ĕçшĕн пĕр пек тÿлессине пĕтерет. Сталин ячĕпе тăракан тата «Путь Ильича» колхозсен опычĕпе усă курса, звенопа ĕçлессине тата звенон кашни членне уйрăм участоксем çумне çирĕплетессине кăçал эпир ытти колхозсенче те пурнăçлама шутлатпăр.

Мухтавлă парне

Мухтав сана, Хĕрлĕ Ялавлă
Орденлĕ Чăваш республики!
Тăван çĕршыв вăрçин фрончĕсенче
Сан ывăлусем малти ретсенче.

Ялхуçалăхĕн чаплă çыннисем —
Колхозниксемпе специалистсем.
Мухтав сире, ĕç паттăрĕсем.
Савăнăр, хаклă юлташсем!

Хастарлă та ĕçчен, харсăр эсир
Стахановла паттăр ĕçлетĕр,
Хăмăрту ялавне çÿлтен-çÿле
Пархатарлăн эсир çĕклетĕр!

Мухтав сире, ман колхозниксем,
Вăйлă тырă-пулă ăстисем.
Хĕрлĕ Çара хĕрÿ пулăшатăр,
Мĕлюншар пăт тырă паратăр.

Çĕнĕрен-çĕн çĕнтерÿсем патне
Эсир паттăр утса пынипе,
Чăваш халăх ячĕ капăрланчĕ
Мухтавлă парнесем туянчĕ.

Аслă вырăс халăхĕ, мухтав сана!
Тăванлă, туслă халăхсене
Çĕнтерÿсем патне ертсе пыран,
Телейлĕ пурнăç туса паран.

Мухтавлă çĕнтерÿ вăхăтĕнче
Татах хĕрÿ ĕçлер хирсенче.
Оборона Комитет ялавне
Чăваш республикĕ алран ямĕ!

Мухтав сана, паттăр Хĕрлĕ Çар —
Совет Союз хурçă крепоçĕ!
Çĕнтерÿсен чĕрĕлĕх çăлкуçĕ —
Мухтав Аслă Сталин, сулпуçĕ!

Н. И. ШЕЛЕПИ,
Чăваш халăх поэчĕ.

Хĕрлĕ Çарăн Крымри чаплă çĕнтерĕвĕсем çинчен Англире мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çакна палăртать: виçĕ хутчен çав тери пысăк çĕнтерÿ тунипе — Феодосия портне, Евпатория портне тата Крым столицине Симферополе йышăннипе — Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Крымăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне ытла ирĕке кăларчĕç. Çак çĕнтерÿсем совет çарĕсене Хура тинĕс хĕррипчи халлĕхе нимĕçсен аллинче тăракан юлашки базăсем патне пыма çул уçса пачĕç.

Лондонри радио обозревателĕ Брент Вуд çапла каланă: хăйсен çапăçури чаплă йăлисене тытса пырса, совет çарĕсем Одесса патĕнче çĕнтернипе вĕсне çитиччен усă курчĕç. Хĕрлĕ Çар çав питĕ паха хулапа порта тытса илни Крымра нимĕçсен кун-çулне татса парасси пурне те паллă пулнă. Апла пулсан та, Хĕрлĕ Çар Крыма çав тери хăвăрт ирĕке кăларса пыни пурне те тĕлĕнтерет. Совет çарĕсем вирлĕн малалла куçса пынипе çав тери савăнатăн. Лондонри радион вăрçă ĕçĕсем çинчен калакан обозревателĕ халь совет çарĕсем валли Севастополе кайма çул уçăлнине палăртса парать. Германипе Румынин Крымри çарĕсен шулас пурнăçĕ питĕ хăрушă, мĕншĕн тесен вĕсен Крымран тинĕс çулĕпе тухса каяс шанчăк питĕ сахал.

США-н СУТУ-ИЛĂ ПАЛАТИН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ ДЖОНСТОН КАЛАНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, США-н Суту-илĕ палатин председателĕ Эрик Джонстон хăй Российăна каясси çинчен пĕлтернĕ. Вăл çапла каланă: эпĕ Российăна «Совет Союзĕн суту-илĕ тăвас тĕлĕшпе малашне мĕнле майсем пуласçине сÿтсе-явма тата Российăн вăрçă хыççăнхи позицийĕпе унăн суту-илĕвĕ США-ри вăтам гражданина мĕнле усă пама пултарнине пĕлме» каятăп, тенĕ.

ХЭЛЛ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонран пĕрлешÿллĕ штатсемпе Англи Испанипе Турцире вăрçă материалĕсемпе сут тунă пирки вăйлă протест панă тесе пĕлтернĕ пулнă. Пичет представителĕсем çавăн пирки Хэлла ыйту панă. Хэлл çапла каланă: нейтральнăй çĕршывсем тĕнĕл держависемпе суту-илĕ тунă пирки çав çĕршывсемпе халĕ те калаçусем пыраççĕ-ха, тенĕ. Хэлл çак ыйту çинчен тĕплĕнрех калаçа пама килĕшмен, анчах та вăл çапла калаçа хунă: Швецийпе те калаçу пырать, тенĕ.

Хэллран çапла ыйтнă: нейтральнăй çĕршывсем тĕнĕл держависемпе малашне те çыхăну тытас пулсан, вĕсен кунçулĕ вăрçă хыççăн мĕнле пуласси çинчен çав калаçусенче вĕсене астутараççĕ-и? тесе ыйтнă. Хэлл çапла каланă: эпĕ çак ыйтăва хирĕç ответ параймастăп, мĕншĕн тесен манăн малтан ытти пĕрлешÿллĕ нацисемпе калаçласа пăхас пулать, тенĕ.

Хэллран тата çапла ыйтнă: Итали ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен консультаци советĕнчен эсĕ Виктор Эммануил король союзниксем Рима илсен Умберто принца регент выранне лартма сăмах пачи çинчен пĕлтерÿ илнĕ-и? — тенĕ. Хэлл çапла каланă: çав советран эпĕ нимĕнле официальнăй пĕлтерÿ те илмен, тенĕ. Хэллран тата çапла ыйтнă: Виктор Эммануил король йышăннă решени США-н Италири представительне Мерфие вăл Вашингтонран Италие таврăничченпанă инструкципе мĕн чухлĕ те пулин çыхăнса тăмасть-и? — тенĕ. Хэлл çапла каланă: эпĕ халь Итали тĕлĕшпе Мускаври декларацире тата хамăн апрелĕн 9-мĕшĕнче каланă сăмахра кăтартса панине çеç калама пултаратăп. çав сăмахра пĕрлешÿллĕ тĕп нацисем, вăл шутра Пĕрлешÿллĕ Штатсем те, Итали ыйтăвĕ çине мĕнле пăхнине сутатса панăччĕ, тенĕ.

Испанири фаланга Англипе США-на Совет Союзне хирĕç вăрçма Гитлерпа пĕрлешме сĕннĕ пулнă. Çав пропагандистла сĕнÿ çинчен калама ыйтнине хирĕç Хэлл çапла каланă: çавăн пек сĕнме мар, çавăн пек шухăш çеç паракан кирек хăш çын та хăй мĕнле ирсĕр ĕç тунине пĕлсе тăмалла, тенĕ. Çавăн пек кампани пыни çинчен хаçатсем пĕлтерни тĕрĕссипе çирĕплетсе паракан материалсем пур-и сан? тесе ыйтсан, Хэлл — çук, тенĕ.

ТУРЦИ ГЕРМАНИЕ ТАВАРСЕМ СУТСА ТĂНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Британи юнайтед пресс агентствин Анкарари корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: эпĕ лайăх пĕлсе тăракан ушкăнсенче çакна илтсе пĕлтĕм—Англипе США икĕшĕ пĕрле Турцие нота янă. Вĕсем çав нотăра Турцирен Германие вăрçă валли кирлĕ япаласене яма пăрахмашкăн ыйтаççĕ.

АНГЛИПЕ АМЕРИКА ШВЕЦИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ НОТАСЕМ ЯНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра апрелĕн 13-мĕшĕнче официально çапла каланă: Британипе Америка правительствисем, Швеци Германипе суту-илĕ тунă пирки, Швеци правительствине нотăсем янă тени тĕрĕс, тенĕ. Çав нотăсенче Швецирен Германие шарикоподшипниксем янине уйрăмах кăтартса панă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла американецсен 1100 йывăр бомбардировщикĕ (вĕсене истребительсен питĕ пысăк соединенийĕсем хÿтĕлесе пынă) Аугсбургри тата Оберпфаффенгофенри авиаци завочĕсене, Германи авиацийĕн Лехфельдри базине тата Швейнфуртри шарикоподшипниксем тăвакан завода тапăннă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 51 самолетне персе ÿкернĕ. Унсăр пуçне тата çĕр çинче тăшман самолечĕсене нумай пĕтерсе тăкнă. Çав операцисенче союзниксен 44 самолет пĕтнĕ.

Союзниксен бомбăсем пăрахакан йывăр авиацийĕ, Италирен вĕçсе тухса, Будапештран 110 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре выртакан Дьер хулине тата Будапештран 10 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехри аэродрома тапăннă.

«Вĕçекен крепость» йышши самолетсен пĕр соединенийĕ Югославири Брод хулинчи сортировка станцийĕ çине бомбăсем пăрахнă.

Апрелĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши самолетсен соединенийĕсем Берлинри тата Хĕвеланăç Германири объектсене тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин тĕрлĕ районĕсем çине тăшман авиацийĕн пысăк мар соединенийĕсем вĕçсе пынă. Хăшпĕр самолетсем Лондон районĕ çине тухнă. Тĕрлĕ пунктсенче бомбăсем пăрахнă. Вилнисемпе аманнисен шучĕ пысăк мар. Бомбăсем тивнипе пулнă сиен те пысăк мар.

СОФИЯРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТАМБУЛ, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, София хулинче «полици сехечĕ» текен вăхăт туса хунă. Вăл каçхине 6 сехет те 30 минутран пуçланать те ирхинехи 5 сехетчен пырать. Çав хушăра халăха урама тухса çÿреме чарнă. Çавăн пекех тата урамра çынсем 3 çынтан ытла пĕрле пухăнса тăма пултараймаççĕ. Полицие ятарласа уйрăм приказ панă. Çав приказра каланă тăрăх, кам полици хушнине итлемест, савна полицейскисем [illegible]

ГРЕЦИ РЕАКЦИОНЕРĔСЕМ ЧАРĂНМА ПĔЛМЕÇÇĔ

КАИР, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Грецире нумаях пулмасть Греци халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен политика комитечĕ организациленнĕ. Грецин Каирта пурăнакан çар организацийĕсемпе граждан организацийĕсем нумайĕшĕ хăйсем çав комитет майлă пулни çинчен тата Грецире нацин пĕрлĕх правительствине тума кирли çинчен пĕлтернĕ. Халĕ çав çар организацийĕсенчи тата граждан организацийĕнчи çынсем питĕ тарăхса кайнă, мĕншĕн тесен çÿлте асăннă политика комитечĕшĕн тăракан грек офицерĕсене çаплах тыта-тыта хупаççĕ.

Çапла пĕлтереççĕ: Греци патриочĕсен организацийĕсем нумайĕшĕ, сăмахран — «Нацие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен лига», «Грексен координаци комитечĕ», «Грексен çĕр çыннисен союзĕн пĕтĕм армири комитечĕ», «Грецин суту-илĕ флотĕнчи моряксен союзĕ т. ыт. те — нумаях пулмасть союзлă державăсен посольствисене протест çырса янă. Çав протестра вĕсем хăшпĕр ют çĕршыв ушкăнĕсем Греци халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен политика комитетне йышăннă организацисене хирĕç тăрса ĕçленине кăтартса панă.

Протестра çапла асăрхаттарнă: çав ушкăнсем çапла хăтланни Цудерос правительствин халăха хирĕç пыракан политикине пулăшса тăрать, халĕ ĕнтĕ Цудерос правительстви Греци çĕршывĕн интересĕсене сыхлама пăрахнă, çавăнпа та халĕ ăна реакционерсен пĕчĕк ушкăнĕ кăна пулăшса тăрать, тенĕ.

АВИЛА КАМАЧОНА ВĔЛЕРМЕ ТĂНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Мексикăран пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер наци дворцĕнче маскекаанецсен пĕр офицерĕ Мексика президентне Авила Камачона вĕлерме тапăннă. Камачопа пĕрле пулнă çынсем çав офицера хĕçпăшалсăрлатнă. Вăл артиллери лейтенанчĕ Антонио Лама Рохос пулнă. Ун çумĕнче Германи докуменчĕсене тупнă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанри флочĕн командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америка çарĕсем Маршаль утравĕсен ушкăнĕнчи 5 утрава йышăннă. Вĕсем çаксем: Айлук, Ронгелап, Лăкиб, Утирик тата Меджит.

Н. Ф. Ватутин

Йывăр операци тунă хыççăн арми генералĕ Николай Федорович **Ватутин** вилнĕ.

Ватутин юлташ пĕтĕм совет халăхне Отечественнăй вăрçă геройĕ, çав тери чаплă генерал тата Хĕрлĕ Çарăн питĕ чаплă полководецĕ пулнипе паллă пулнă.

Ватутин юлташ 19 çултан пуçласа Хĕрлĕ Çарта тăнă. Вăл чи малтан рядовой боец пулнă, чи юлашкинчен — нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан çапăçусен чи паха фрончĕн командующийĕ пулнă.

Ватутин юлташ, ÿснĕçем-ÿссе пырса, тĕрлĕ вăхăтра тĕрлĕ пехотнăй подразделенисен командирĕ, дивизи штабĕн начальникĕ, Киев облаçĕнчи уйрăм çар округĕн штабĕн начальникĕ, генеральнăй штабăн оперативнăй управленийĕн начальникĕ, генеральнăй штабăн начальникĕн 1-мĕш заместителĕ пулнă. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вăл фронт штабĕн начальникĕ, унтан тĕрлĕ фронтсен çарĕсен командующийĕ пулса ĕçленĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче фронт командующийĕ пулса тăрса, вăл Сталинградра туса ирттернĕ операцие, Дон шывĕ кукринчен Донбаса çитиччен çĕнтерÿллĕн туса пынă наступление питĕ активлăн хутшăннă, Белгородпа Курск районĕнчи çапăçура çĕнтерÿллĕ операци туса ирттернĕ, Киев, Житомир, Бердичев, Ровно хулисене туртса илнĕ.

Ватутин юлташăн ятне Верховный Главнокомандующин Совет Союзĕн Маршалĕн **Сталин** юлташăн Хĕрлĕ Çар ĕçĕсене палăртас шутпа панă нумай приказĕсенче асăннă.

Совет правительстви **Ватутин** юлташа темиçе хут та аслă орденсем парса наградăланă, ăна **Хĕрлĕ Ялав** орденĕ, **Ленин** орденĕ, 1-мĕш степень **Суворов** орденĕ, 1-мĕш степень **Кутузов** орденĕ панă.

Ватутин юлташ Отечественнăй вăрçăра Тăван çĕршыва çиелле кăларассишĕн тунă паттăр ĕçĕсемпе паллă пулса тăнă, ăна совет халăхĕпе пĕтĕм Хĕрлĕ Çар питĕ хисеплепĕ.

Ватутин юлташ **Ленин-Сталин** партийĕн ĕçне чунтан парăнса тăнă, вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне Хĕрлĕ Çарпа хамăрăн Тăван çĕршывшăн панă.

Арми генералĕ **Ватутин** юлташ Ленин-**Сталин** партийĕн ĕçĕшĕн çĕнтерÿллĕн кĕрешнĕ. Çав ĕç ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ.

Жуков, Хрущев, Василевский, Ворошилов, Буденный, Тимошенко, Шапошников, Конев, Воронов, Яковлев, Новиков, Голованов, Федоренко, Ротмистров, Пересыпкин, Воробьев, Щербаков, Антонов, Хрулев, Мерецков, Рокоссовский, Малиновский, Толбухин, Говоров, М. М. Попов, Баграмян, Еременко, Соколовский, Тюленев, Пуркаев, Ковалев, Голиков, Смородинов, Артемьев, Юрниец, Крайнюков, Кальченко, Боголюбов, Карпоносов, Ф. Ф. Кузнецов, В. Д. Иванов, Аборенков, Дегтярев, Ильичев.

АТĂЛ ÇИНЧЕ

Атăл шывĕ хăвăрт хутшăнма тытăннă. Юлашки кунсенче вăл кашни талăкра 15—20 сантиметр таран хутшăнать. Апрелĕн 15-мĕшĕ тĕлне Атăл шывĕ пурĕ 161 сантиметр хутшăннă. Сывлăшри температура 3,5 градус, шыври температура 1 градус ăшă.

Атăл çинчи пăр кăлăшкаланма тытăннă. Унăн икĕ енĕпе шыв тапса тухнă. Атăл пăрĕ икĕ хут—пирвайхи хут апрелĕн 11-мĕшĕнче, иккĕмĕш хут апрелĕн 14-мĕшĕнче шуса ларнă.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ**

Ялхуçалăх банкĕн Чăваш конторине çакăн пек работниксем кирлĕ: конторăра ĕçлеме—финансировани инспекторĕ, колхозсем тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор, бухгалтер; ялхуçалăх банкĕн уполномоченнăйĕсен районсенчи пункчĕсенче ĕçлеме—уполномоченнăйсем тата инспекторсем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, здание Госбанка, Контора сельхозбанка.

2—1.

Центрти Главзаготскотăн Чăваш конторине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: транспортпа сбыт начальникĕ, диспетчер, база хуçалăхĕн начальникĕ, старши экономист, экономист-статистик, госзакупкăсен инспекторĕ тата секретарь.

Адрес: гор. Чебоксары, Канашская, 31, кв. 6—12.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00091. Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.